# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

**Муркаш район хаҫачӗ** **1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать**

*46 (8613) №* ✻ *Юнкун, ҫӗртме (июнь) уйӑхӗн 27-мӗшӗ* ✻ *Хакӗ ирӗклӗ*


Республика кунӗ

# Ҫӗнӗ цех ӗҫлеме тытӑнчӗ



**Сӑн ӳкерчӗкре: республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев пирӗн районти «Сеспель» предприятин ҫӗнӗ производство цехӗн ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашать.**

***Республика кунӗ – тӑван Чӑваш Енӗн тӗп уявӗ. Ҫӗкленӳллӗ хавас кӑмӑл-туйӑмпа паллӑ тӑваҫҫӗ ӑна ҫуллен республика ҫыннисем. Ҫак кунсенче пӗтӗм республика шайӗнче тӗрлӗрен уяв мероприятийӗ иртет. Чылайӑшӗшӗн вӑл манӑҫми самантсемпе асра юлать.***

***Пирӗн чӑваш халӑхӗн ырӑ йӑла пур. Ку вӑл – уява уяв парни хатӗрлесси. Кун пек парнене Республика кунӗ тӗлне муркашсем те хатӗрлеме пултарчӗҫ. Район территорийӗнчи республика тата ҫӗршыв пӗлтерӗшлӗ предприяти – танк-контейнерсем туса кӑларакан «Чебоксарское предприятие «Сеспель» пӗрлешӗвӗ июнӗн 23-мӗшӗнче хӑйӗн черетлӗ иккӗмӗш производство цехне хута ячӗ. Ҫав ятпа иртнерӗ савӑнӑҫлӑ мероприятие Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев та хутшӑнчӗ.***

Пысӑк пӗлтерӗшлӗ мероприятие хӑнасем йышлӑ пухӑнчӗҫ. Вӗсене «Сеспель» директорӗ Владимир Бакшаев кӗтсе илчӗ. Хӑнасем шутӗнче РФ Федераци Пухӑвӗн Патшалӑх Думин депутачӗсем Анатолий Аксаков, Николай Малов, Леонид Черкесов, Алена Аршинова, Олег Николаев, тӗрлӗрен департаментсемпе ассоциацисен, министерствӑсен, ҫӗршывӑн 17 регионӗнчи «Сеспельпе» ҫыхӑнса ӗҫлекен предприятисен, республикӑри 20 промышленноҫ предприятийӗн представителӗсем пулчӗҫ.

**(Вӗҫӗ 2 стр.)**

Специалистпа калаҫатпӑр

# Шыва кӗмелли тапхӑрта

**Аслӑ ӑрурисем те, ачасем те ҫу кунӗсенче час-часах ял ҫумӗнчи пӗве-плотинӑра шыва кӗрсе шӑрӑх ҫанталӑкпа «кӗрешеҫҫӗ». Ку вара пуринчен те пысӑк асӑрханулӑх ыйтать, мӗншӗн тесен – хӑрушлӑх юнашар. Пӗве-плотинӑра шыва кӗмелли сезонта мӗнле правилӑсене пӑхӑнмаллине, мӗн ҫине ытларах тимлӗх уйӑрмаллине пурин те асра тытмалли пирки пирӗн паянхи калаҫу. Редакци хӑни – район администрацийӗн ятарлӑ программӑсен пайӗн пуҫлӑхӗ Г. ЛЮБИМОВ.**

– Хальлӗхе ҫанталӑк ӑшӑтса ячӗ, ҫавӑнпа ӑшӑ ҫу кунӗсем пысӑк тимлӗх ыйтни пирки никамӑн та манма юрамасть. Ҫакна ӑнлансах Раҫҫей Федерацийӗн саккунӗпе, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн йышӑнӑвӗ-хушӑвӗпе килӗшӳллӗн, 2018 ҫулта ҫуллахи шыва кӗмелли вӑхӑт ҫывхарнӑ май, пирӗн район администрацийӗ те ҫуллахи шыва кӗмелли тапхӑрта районти пӗвесемпе кӳлӗсенче хӑрушсӑрлӑха пӑхӑнас йӗрке ҫинчен ҫӗртме уйӑхӗн 7-мӗшӗнче 579-мӗш номерлӗ хушу кӑларчӗ. Хускатнӑ ыйтӑвӑн вӑхӑчӗ ҫитнине кашниех куратпӑр. Унта палӑртнӑ тӑрӑх ҫу кунӗсем тата шыва кӗмелли вӑхӑт ҫитнӗ май, ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен вырӑнсенче кая юлмасӑр ҫак ӗҫсене туса ирттермелле е пурнӑҫламалла:

– шыва кӗмелли вырӑнсене палӑртса нормативлӑ право акчӗсем хатӗрлесе йышӑнмалла;

– шыв ҫинчи хӑрушсӑрлӑхпа ӗҫ планӗсем туса хатӗрлемелле;

– ял тӑрӑхӗсенче шыва кӗмелли тапхӑрти хӑрушсӑрлӑх йӗркипе ларусем ирттермелле;

– шыва кӗмелли вырӑнсем хатӗрлесе унти кану йӗркине йӗркелемелле;

– шыва кӗмелли вырӑнсене тӗрӗслесе тухмалла;

– ҫынсем массӑллӑ шыва кӗнӗ вырӑнсенче хӑрушсӑрлӑх ыйтӑвӗсемпе профилактика стенчӗсем усмалла.

Шыва кӗме каякансен вара ҫак йӗркене пӑхӑнмалла:

– шывра нумай ан пулӑр;

– ҫырана ачасене пӗччен пӑрахса ан хӑварӑр;

– ӳсӗрле шыва ан кӗрӗр;

– паллӑ мар вырӑнта шыва ан чӑмӑр;

– хумсем вӑйлӑ пулсан тата аслатиллӗ ҫумӑр чух шыва кӗресрен асӑрханӑр.

Шыва массӑллӑ кӗмелли вырӑнсенче ял тӑрӑхӗн активӗнчен тата медицина ӗҫченӗсенчен дежурствӑсем йӗркелемелле.

– Вырӑнсенче шыв ҫинчи хӑрушсӑрлӑх правилисем пирки тӑтӑш калаҫусем ирттермелле.

Ҫӗртме – утӑ уйӑхӗсенче «Шыв ҫинчи хӑрушсӑрлӑх уйӑхӗ» иртересси те районта пурӑнакансен шыв ҫинчи пӗрлехи хӑрушсӑрлӑхӗпе ҫыхӑннӑ.

Районта

# Юсав ӗҫӗсене пуҫӑннӑ

«Создание современной образовательной среды для школьников» приоритет проекчӗпе килӗшӳллӗн хальхи вӑхӑтра Шомикри тӗп шкулта тӗплӗ юсав ӗҫӗсем пыраҫҫӗ. Каласа хӑвармалла, асӑннӑ проект условийӗпе килӗшӳллӗн 50 процент ытла кивелнӗ шкулсене юсаҫҫӗ.

Ҫак кунсенче Йӳҫкасси, Оринин тата Чуманкасси шкулӗсенче те юсав ӗҫӗсене пуҫӑннӑ. Ку шкулсенче спортзалсене хӑтлӑрах тӑвассипе тимлеҫҫӗ.

Шкулсенче ӗҫлекен подряд организацийӗсем пур ӗҫе те графикпа палӑртнӑ вӑхӑтра пурнӑҫлама шантараҫҫӗ.

**Хамӑр инф.**

Симӗс ӗҫ ҫи – 2018

# Выльӑх апачӗ хатӗрлеҫҫӗ

Оперативлӑ кӑтартусене пӑхсан, ӗнерхи куна районти ҫӗр ӗҫченӗ пур хуҫалӑхра та выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫе туллин кӳлӗннӗ. Агрофирмӑсем, ял хуҫалӑх производство кооперативӗсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсем уяр кунпа туллин усӑ курса 1500 тоннӑна яхӑн типӗ утӑ, 1400 тонна ытла паха сенаж хатӗрленӗ.

Уйрӑм хуҫалӑхсене илсен, ку кӑтартусем самай пысӑк. Тӗслӗхрен, кӗске хушӑрах Е. Андреев яч. хис., Суворов яч. хис. кооперативсемпе «Путь Ильича» агрофирма ҫӗршер тонна типӗ утӑ янтӑлама ӗлкӗрнӗ. «Свобода» кооператив 1405 тонна паха сенажа траншейӑна хывнӑ.

# Ҫумпа кӗрешеҫҫӗ

Ыранхи кунпа пурӑнакан хресчен акнӑ-лартнӑ культурӑсене тӗрӗс-тӗкел пӑхса ӳстерессине те иккӗмӗш вырӑна хӑвармасть. Ӗнерхи кун тӗлне хуҫалӑхсем тыр-пул лаптӑкӗн 7611 гектарӗ ҫинчи ҫум куракӗпе тата сӑтӑрҫисемпе химилле майпа кӗрешнӗ.

Кӗрхи культурӑсем акма хӑварнӑ 3898 гектар пусу ҫӗрне, 454 гектар ҫӗр улми пуссине ҫумпа кӗрешсе кӑпкалатса тухнӑ.

**А. БЕЛОВ**
**хатӗрленӗ.**

Ҫырӑнтару – 2018

# Хаҫат ҫырӑнма васкӑр

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата июль уйӑхӗнчен илсе тӑма ҫырӑнтармалли тапхӑр вӗҫленсе пырать. Кӗрхи-хӗллехи каҫсенче райхаҫата вулас тесен паян-ыранах почтальона тӗл пулма васкӑр.**

**Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак – 434 тенкӗ те 22 пус.**

**Район хаҫатне альтернатива мелӗпе (300 тенкӗ) ҫырӑнас текенсен редакцине паспортпа килмелле.**

Саламлатпăр



Хисеплĕ те хаклă йăмăка – «Незабудка» ача сачĕн ертÿçинче тăрăшакан **Вера Алексеевна ФЕДОТОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр.

55 çул вăл нумай мар,
Вăрăм пултăр сан кун-çул.
Чир-чĕр çине алă сул,
Каç выртсассăн канлĕх пултăр,
Ирпе тăрсан ырлăх пултăр.
Вăрманта мĕн чухлĕ хурăн –
Эсĕ çавăн чухлĕ пурăн.

**Саламлаканĕсем: аппăшĕсем тата вĕсен çемйисем, тăванĕсем.**

Пирĕн хисеплĕ çыннăмăра, ăшă кăмăллă аннене, юратнă асаннене, шанчăклă тăвана – Çармăçкасси ялĕнче пурăнакан **Валентина Петровна ВАСИЛЬЕВĂНА** паян 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.



Юбилей ячĕпе эпир ăна мĕнпур ыррине кăна сунатпăр. Мĕн шутланисем пурнăçланса пычăр, чир-чĕр санран аяккала пăрăнтăр. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн Турра тав тăватпăр.

**Пысăк салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрÿшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем, хăти-тăхлачисем, пĕтĕм ял-йыш, кÿршисем.**

Уяв

# Çамрăксен кунне – Муркаша

Раççейри çамрăксен кунне Муркашра çитес эрнекун, июнĕн 29-мĕшĕнче, уявласçĕ.

Уяври самантсене тишкернĕ май йĕркелÿ комитечĕ уяв программи çине те пысăк тимлĕх уйăрчĕ. Уяв площадкисем 18.00 сехетре ĕçлеме тытăнаççĕ. Вăл шутра «Картинг тата робототехника», «Культурный БУМ» площадкăсем тата ытти те.

Уява савăнăçлă лару-тăрура официаллă майпа уçиччен (19.40 сехетре палăртнă) куракансене «Картина» ансамбль çумĕнчи çамрăксен «Смайл» ушкăнĕ илемлĕ юрăсемпе тыткăнлĕ.

Программăра çавăн пекех гитарăпа вылякансем, фитнес-аэробика ташшине кăтартакансем, Юнкă шкулĕнчи КВН команди, ыттисем те хутшăнаççĕ.

Уявра кăçалхи выпускниксен балĕнчи чи илемлĕ мăшăра суйлаççĕ. Уяв сцени çинче район администрацийĕн ятарлă стипендине тивĕçнисене, пултаруллă яш-кĕрĕме, шкултан «пиллĕк» паллăсемпе кăна вĕренсе тухнисене тата вĕсен ашшĕ-амăшĕсене чысласçĕ.

Муркаш çамрăкĕсене çав кун Алексей Московский тата Андрей Думилин эстрада юрăçисем те савăнтарĕç.

Ташă каçĕ 24.00 сехетчен тăсăлĕ. Ун вăхăтĕнче, 23.00 сехетре, Муркаш çинчи тÿпене фейерверк сутатĕ.

Асăрхаттарса хăваратпăр, июнĕн 29-мĕшĕнче Муркашри тĕп урампа автомашинăсене 16.00 сехетрен çÿреме чараççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

Район администрацийĕн 2018 çулхи июнĕн 9-мĕшĕнчи 587-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Çынсен сывлăхне сыхлама тÿпе хывнăшăн, нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн тата Медицина ĕçченĕн кунне уявланă май:

– **Надежда Александровна МИКРЯКОВĂНА**, Муркаш район тĕп больницин терапи уйрăмĕн терапевт врачне;

– **Елена Алексеевна ТОКАРЕВĂНА**, Муркаш район тĕп больници поликлиникин медицина сестрине.

2. Çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессин сферинче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн:

– **Людмила Петровна ЕГОРОВĂНА**, Муркаш почтамтĕн Отаркăри çыхăну уйрăмĕн 3-мĕш класлă почтальонне.

Республика кунĕ

# Çĕнĕ цех ĕçлеме тытăнчĕ



Сăн ÿкерчĕкре: вĕсем çĕнĕ цехра ĕçе тытăнаççĕ.

(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.)

Мероприятие район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ Игорь Николаев, Москакасси ял тăрăх администрацийĕн пуçлăхĕ Денис Кириллов та хутшăнчĕç.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн сăмахĕнче пурне те Республика кунĕпе саламларĕ, предприятие малашне те аталанупа ăнăçу сунчĕ, кунта вăй хуракансене тав сăмахĕ каларĕ.

Михаил Васильевич палăртнă тăрăх, çĕнĕ производство цехне хута яни республикăшăн кăна мар, пĕтĕм Раççейри машинăсем тăвакан отрасльшĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. РФ Президенчĕ Владимир Путин çĕнĕ производствăсем йĕркелесси, модернизаци çине пысăк тимлĕх уйăрать, пысăк технологи продукцине чикĕ леш енне сутассине йĕркелессипе задачăсем лартать. Асăннă предприяти продукцине те ытти çĕршывра хапăл тусах туянаççĕ.

Михаил Васильевич пĕлтерĕшлĕ тепĕр саманта та палăртса хăварчĕ. Çĕнĕ производство цехĕ Шупашкарта мар, яллă вырăнта уçăлать. Муркаш районĕ вара Шупашкар агломерацине кĕрет. Федерацин «Хăрушлăхсăр тата пахалăхлă çул-йĕр» программипе районта çулсене юсас ĕçсем анлă сарăлнă. Çĕнĕ цех ĕçлеме тытăнни вара ялта пурăнакансем валли çĕнĕ ĕç вырăнсем йĕркеленине пĕлтерет.

Предприяти директорĕ Владимир Бакшаев предприятие аталантарма пулăшнăшăн республика Пуçлăхне Михаил Игнатьева, çĕршыв ертÿлĕхне тав сăмахĕ каларĕ. Танк-контейнерсем туса кăларассипе ĕçе кĕртнĕ 500 млн тенкĕлĕх инвестици проекчĕ – республикăра чи пĕлтерĕшлисенчен пĕри. Ăна ĕçе кĕртме çĕр законодательствине улшăнусем кĕртсе Чăваш Республикин Пуçлăхĕн указĕпе 9,55 гектар çĕр участокне торг ирттермесĕрех уйăрса панă. Чăваш Республикин промышленноç аталанăвĕн тата инвестици ĕçĕ-хĕлĕн фончĕ оборудовани туянма «Сеспель» предприятие çăмăллатнă ставкăпа 100 млн тенкĕ тĕллевлĕ кредитпа тивĕçтернĕ.

Çĕнĕ производство цехне хута янă чухне ĕç паттăрĕсене те чысларĕç. Нумай çул хушши тăрăшса вăй хуракансене Михаил Игнатьев Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвне тата алла çыхмалли сехет парса палăртрĕ. Вĕсен шутĕнче директорăн коммерци енĕпе ĕçлекен çумĕ Александр Бакшаев, директорăн производство енĕпе ĕçлекен çумĕ Владимир Блинов, производство пуçлăхĕ Вячеслав Михайлов.

Çĕнĕ производство цехне хута янă ятпа хĕрлĕ хăйăва касса татнă хыççăн Михаил Игнатьев тата хисеплĕ хăнасем предприятин шĕвек, кĕрпеллĕ тата газ продукцине упрамалли тата илсе çÿремелли танк-контейнерсем туса кăларакан çĕнĕ производство цехĕн ĕçĕ-хĕлĕпе, продукци тĕсĕсемпе интересленсе паллашрĕç.

Çав вăхăтрах республика ертÿçи район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ростислав Тимофеевпа та калаçса илчĕ, предприятире вырăнти çамрăксем ĕçлессĕ-и тесе интересленчĕ. Кунта ытларах вырăнти яшкĕрĕм вăй хунине пĕлсен кăмăллă пулчĕ.

Каярах хăйĕн салам сăмахĕнче Ростислав Тимофеев «Сеспель» предприяти район чысĕ пулни пирки каларĕ. Çĕнĕ производство хута кайни ял çамрăкĕсем валли лайăх ĕç укçиллĕ 200-е яхăн ĕç вырăнĕ йĕркеленине пĕлтерет. Апла пулсан ытти регионсене кайса çÿремесĕрех тăван ен, республика, çĕршыв малашлăхĕшĕн тата харпăр хăйĕн тулли кăмăлпа ĕçлеме май пур.

Шупашкарти тата хамăр районти ташă ушкăнĕсем пухăннисене илемлĕ ташăсемпе савăнтарчĕç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**



Тÿрĕ ыйту – тÿрĕ хурав

# Йĕркине кам туса парĕ-ши?

«Тÿрĕ ыйту – тÿрĕ хурав» телефонĕпе **Çатракасси ял тăрăхĕнчен пĕр хĕрарăм** шăнкăравлани (ятне-шывне асăнма килĕшмерĕ) анлăрах калаçăва чĕнчĕ. Акă мĕн калать вăл: «Район хаçатĕнче эсир çав хуçасăр ирĕклĕн çÿрекен качакасемпе сурăхсене чарасси пирки миçе хутчен çырмарăр пулĕ ĕнтĕ. Вăл шутра выльăхсен кун пек хуçисене явап тыттарасси пирки те. Килти выльăха тытса усрассипе административлă право нормисене пăсакансене Чăваш Республикин саккунĕпе 500 тенкĕрен тытăнса 1000 тенкĕ таран штрафлама май пулни пирки те çырнăччĕ. Анчах та усси вара? Качаки-сурăхĕ çатракассисемпе ятмансен иртнĕ çул мĕнле ирĕклĕн çÿренĕ, кăçал та çаплах çÿрет», – тет.

Малтанах çавна каласа хăварас пулать. Хĕрарăм каласа панă йышши лару-тăру хальхи вăхăтра Çатракасси ял тăрăхĕнче кăна мар. Ку енĕпе ÿкерчĕк ытларах çĕрте пĕр пекех. Хăйсен пахчине кĕрсе кайса сурăхсем йăрансене таптаса тăкни, кулăсти-кăшманне кăшласа пĕтерни пирки ял çыннисем кăмăлсăр калаçни пирки тăтăшах илтме пулать. Чăнах çапла, кун пеккисене ăнланма пулать. Çу каçа лартса, çумласа, шăварса пăхса ÿстернĕ çимĕçе никамăн та сурăх-качака кулли тăвас килмест.

Маларахри çулсенче ку енĕпе йĕрки те пулнă пек туйăнать. Ытларах çĕрте ун чухне ĕнесене кăна мар, сурăхсемпе качакасене те черетпе кĕтÿре кĕтсе çÿретчĕç. Унтанпа вара мĕн улшăнчĕ-ши? Саккунĕсем-и? Йĕрки-и? Çыннисем-и? Хамăрах чунсăрланса пыратпăр пулмалла çав. Намăс-симĕс мĕнне те манатпăр пулас. Санăн ирĕклĕн çÿрекен выльăху кÿршĕ пахчине кĕрсе кайса сăтăр туса тăкнă пулсан, кайран пахча хуçине куçран мĕнле пăхмалла-ха? Хăшĕсемшĕн çакă темех мар иккен.

Анчах та çынна саккун хÿтĕлеме тивĕç вĕт-ха. Выльăхсен кун пек пуçтах хуçисем тĕлĕшпе те саккун нормисене пăхса хунă. Апла пулсан саккунпа пăхнă йĕркесене пăхăнассишĕн, вырăнта йĕрке тăвассишĕн камăн тăрăшмалла? Çак йĕркене чи малтанах ял тăрăхĕ тума тивĕç пулĕ. Федерацин 2003 çулхи 131-мĕш номерлĕ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации» Саккунĕ çапла хушать. Халĕ ку енĕпе вырăнти влаç органĕсене пысăк правасем панă. Вĕсемпе туллин усă курни кирлĕ.

Хуçасăр выльăхсене ирĕклĕн çÿреме чарасси пирки **Чăваш Республикин прокурорĕн çумĕ, юстицин аслă советникĕ А.И. Григорьев** панă хурава илсе кăтартасшăн. Вырăнсенче ял çыннисен выльăхĕсене тытса усрассипе чăннипех те йĕрке тăвас шухăшлисемшĕн пĕлтерĕшлĕ пулĕ тесе шухăшлатăп. Акă вăл панă хуравран илнĕ йĕркесем:

«Муркаш районĕнчи муниципалитет йĕркеленĕвĕсен территорийĕнче выльăх-чĕрлĕхе, вăл шутра майракаллă шултра выльăхсене усăлтарса çÿрессипе, кĕтсе çÿрессипе тата хăваласа каяссипе çыхăннă право хутшăнăвĕсене Тирпей-илем кĕртмелли правилăсенче палăртнă. Вĕсене вырăнти хăй тытăмлăхăн халăх суйлакан органĕсем йышăннă. *Асăннă правилăсемпе килĕшÿллĕн харпăр хăйĕн выльăх-чĕрлĕхне никам пăхмасăр, кăкармасăр çÿретме юрамасть.*

Ирĕклĕ çÿрекен выльăхсемпе çыхăннă право хутшăнăвĕсене Раççей Федерацийĕн Граждан кодексĕпе килĕшÿллĕн палăртнă.

Йытăсене тата килти ытти выльăх-чĕрлĕхе тытса усрамалли правилăсене пăснăшăн явап тыттарассине Чăваш Республикин «Об административных правонарушениях в Чувашской Республике» Саккунĕн 15-мĕш статйинче çырса кăтартнă.

Кунсăр пуçне Раççей Федерацийĕн Граждан кодексĕнче гражданла право яваплăхĕ пирки калани те пур. Хăйсен выльăх-чĕрлĕхĕ кÿнĕ сиене вĕсен хуçисем саплаштарма тивĕç».

Халĕ вара ыйтас килет: пуçтах хуçисен сурăхĕсемпе качакисене ют çын пахчинче, урам хушшинче, хирти акнă тырă пуссинче ирĕклĕн çÿреме чарма тата мĕн çитмест? Тен шăпах хуçасăр сурăх-качакаран шар куракансен чĕмсĕрлĕхĕ, мĕскĕнлĕхĕ, яваплисенчен йĕрке туса пама ыйтманни?

**«Тÿрĕ ыйту – тÿрĕ хурав» телефонĕсем: 62-2-82, 8-927-857-42-06.**

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**
**ХАКЛĂ ÇАМРĂКСЕМ!**

**Сире пурне те Раççейри çамрăксен кунĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.**

**Çамрăклăх – кашни çыншăн чи илемлĕ те телейлĕ вăхăт. Шăпах çак вăхăтра эпир хамăрăн ĕмĕт-тĕллевсемпе çунатланатпăр, вĕсене пурнăçа кĕртетпĕр.**

**Пирĕн районта кашни сферăрах маттур та пултаруллă, пуçаруллă çамрăксем сахал мар. Ĕçре çитĕнӳсем тунипе пĕрлех вĕсем обществăлла мероприятисенче те хастар. Тавах сире районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕшĕн тăрăшса ĕçленĕшĕн.**

**Пирĕн район пуласлăхĕ, çĕршыв малашлăхĕ – çамрăксенче. Район администрацийĕ çамрăксем ялта юлччăр тесе пурнăç шайне çӳллĕ шая çитерессине нумай тимлĕх уйăрать. Çамрăксене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма пулăшас тĕллевпе тĕрлĕрен программăна хутшăнатпăр, çамрăк çемьесене тӳлевсĕр çĕр парассипе те ĕçлетпĕр. Районта çулсем, социаллă объектсем тăватпăр. Пултаруллă çамрăксене хавхалантарма майсем те тупатпăр.**

**Хаклă çыннăмăрсем! Яланах чунпа çамрăк пулăр. Ĕçлес килнĕçемĕн ĕçлес килтĕр. Малашне те ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр. Кун-çулăр вăрăм та телейлĕ килтĕр. Чĕрери юрату та нихăçан та ан иксĕлтĕр.**

**Район пуçлăхĕ – депутатсен район Пухăвĕн председателĕ**
**И. НИКОЛАЕВ.**
**Район администрацийĕн пуçлăхĕ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

Паян – Раççей çамрăксен кунĕ

# Райпо малашлăхĕ – çамрăксенче





Муркаш енĕн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ тĕрлĕ çулта хамăр тăрăх аталанăвĕшĕн вăй хунисемпе тачă çыхăнăва сӳнме паманнипе те ăнăçса пырать. Çак ырă ене çамрăк ăру тивĕçлипе хаклать тата аслă ăрăвăн ĕçне малалла аталантарать пулсан, ыранхи кунпа çыхăннă пĕрлехи тăрăшулăх та пысăк вырăн йышăнать. Çапла пулсан çеç ăнăçу çулĕ уçăлсах, ят-сум хушăнсах пырĕ.

Суту-илӳ е обществăлла апатлану, ачасене вулама-çырма вĕрентесси-и е çĕршыва сыхласси, ял хуçалăх е промышленноç аталанăвĕ – çамрăк ăру пур çĕрте те ыттисемшĕн тĕслĕхре. Вăл аслисен пуçарăвне малалла аталантарать, ыранхи кунпа пурăнма вăй-хал парать.

Мăн Сĕнтĕр райповĕ – кун уттипе тан пыракан коллектив. Пĕрлехи ĕçре кашнин тӳпи пур. Москакассинчи «Апат-çимĕç» магазинĕнче хăнана кĕтсе илме е уяв сĕтелĕ хатĕрлеме паха тавар яланах çителĕклĕ. Çак ĕçе эсир **пĕрремĕш сăн ӳкерчĕкре** куракан Наталья Димитриева йĕркелесе пырать. Малараx кунта 6 çул сутуçăра ĕçленĕ çамрăка халĕ ертӳçĕ пулма шаннă. Яваплăха туйнăран вăл ĕçе ăнăçлă йĕркелесе пырать. Çапла вара тăваттăн ĕçлекен коллектив уйăхсерен миллион ытла тенкĕлĕх тавар сутать.

**Иккĕмĕш сăн ӳкерчĕкре** куракан Нина Пегасова Мăн Сĕнтĕрти «Пиццерире» 5-мĕш çул повар-кассир пулса ĕçлет. Апатланма кĕрекенсемпе ялан тараватскерпе тавар туянакансем те кăмăллă. Çавăнпа вĕсем хăйсемпе пĕрле тантăшĕсене, юлташĕсене апатланма кунта йыхравлаççĕ.

Уйрăм ĕçченсен тăрăшулăхĕ пĕрлехи ӳсĕме, савăнăçа çаврăннине Мăн Сĕнтĕр райповĕнче лайăх ăнланаççĕ.

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Пушар хăрушсăрлăхĕшĕн

# Тĕллев – янтă утта упрасси

**Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе килти хушма хуçалăхсенче паян çитес хĕл валли выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ хатĕрлессипе ĕçсем анлă пыраççĕ. Ыранхи кун пирки шутлани лайăх-ха та, анчах çак тапхăрта пушар хăрушсăрлăхĕ пирки самантлăха та манмасан, ыранхи кун татах тулăхрах пуласси пирки те иккĕленӳ çук. Кунта вара пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнасси малти вырăна тухать. Çĕр ĕçченĕн çак ответлă тапхăрĕнче «хĕрлĕ автан» вăй илсе экономикăна сиен кӳресрен кашнийĕнех асăрханмалла: хирте те, килте те, вите-сарайĕнче те.**

**Ут çи – халăх тата ял хуçалăх техники ĕçе массăллă явăçнă тапхăр. Ыранхи куна пăхса ĕçлемелли вăхăт пулнăран, паян хамăр тĕпеле патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторне Олег БАСКАКОВА чĕнтĕмĕр.**

– Ял хуçалăх предприятийĕсемпе килти хушма хуçалăхсенче симĕс ĕç çи вăй илнĕ вăхăтра пушар хăрушсăрлăхĕпе калаçу пуçарнине ырлатăп кăна. Мĕншĕн тесен статистика шăпах çак вăхăтра «хĕрлĕ автан» ытларах алхаснине çирĕплетет. Хĕрӳ ĕç çине пула тимлĕхе пĕр самантлăха çухатни вуншар тонна типĕтсе янтăланă утă-улăма кĕске вăхăтрах кĕл туса çилпе вĕçтерет, хаклă та паха техникăна юрăхсăра кăларать. Çакна шута илсе тата ял ĕçченĕн хальхи хĕрӳ ĕç çийĕ вут-кăвар алхаснипе ан «çутăлтăр» тесе пĕрлешӳллĕ кооперативсенче е хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче, килти хушма хуçалăхсенче çак ĕçсене кун йĕркинче тытма ыйтатăп:

1. Çак вăхăтра ГСМ упракан, выльăх апачĕ хуракан складсене, машинăпа трактор паркĕсене, витаминлă курăк çăнăхĕ тунине тата упранине пушар хăрушсăрлăх тĕлĕшпе комиссипе пăхса тухмалла. Çав вырăнсенче шыв, пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсем, çыхăну, пушар çинчен сасă парса пĕлтермелли устройствăсем çителĕклĕ пулмалла.

2. Выльăх апачĕ хатĕрлеме хутшăнакансене ятарлă журналта алă пустарсах ĕç çинчи пушар хăрушсăрлăхĕн правилисемпе паллаштарма сĕнетĕп.

3. Утă капанĕсене е утă рулонĕсем упранакан вырăнсене электричество линийĕсенчен аяккарах вырнаçтарма тăрăшмалла.

4. Утă çине хутшăнакан техникăна «хĕрлĕ автанпа» кĕрешмелли пирвайхи хатĕрсемпе тата хĕм сӳнтермелли устройствăсемпе çителĕклĕ комплектламалла.

Халĕ каланă ĕç йĕркисем ахаль сăмахсем мар. Вĕсене пурнăçран илнĕ. Йĕркене пăхăнманнисемпе вара çивĕч калаçу пулĕ. Кайран ĕнсе хыçмалла ан пултăр тесен ĕç çинчи пушар хăрушсăрлăхĕшĕн тăрăшса çак ансат правилăсене пурин те пурнăçласчĕ. Унпа пĕрлех çак хĕрӳ вăхăтра ведомство тата ирĕклĕ пушар хуралĕсен службине специалистсемпе вăйлатасси пирки те манмалли çук. Пушар сӳнтерме пăхнă техникăна бензинпа яланах çителĕклĕ, кирлĕ чухлĕ шывпа тытмалла, юсавсăр пушар машинисене строя тăратассипе пурин те маларахах ĕçлемелле.

Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса пырсан вăхăтра тата çителĕклĕ хатĕрленĕ выльăх апачĕ çитес хĕл кунĕсенче хуçалăх производствине пĕр хавшатмасăр тытса пыма пулăшĕ.

Районти 37-мĕш номерлĕ пушар часĕ çулталăк пуçланнăранпа паянхи кунччен 20 пушара (пĕлтĕр çак вăхăта «хĕрлĕ автан» 18 хутчен алхаснă) тата пушар хăрушсăрлăх правилине пăхăнманран çӳп-çап тата курăк çуннине сӳнтерме темиçе хутчен тухрĕ. Кашнинчех хамăр тивĕçе чыслă пурнăçларăмăр, –пĕлтерчĕ аслă инспектор.

Сăмах – сывлăх хуралçине

# Шыва кĕмелли йĕрке

Çу кунĕсем – илемлĕ кану вăхăчĕ. Нумайăшĕ ăна шыв хĕрринче ирттерме тăрăшать. Ку лайăх, анчах вăл е ку йĕркене пăхăнмасан, ăна самантлăха пăссан çак илем кĕске хушăрах пысăк инкеке çул уçать. Çак сăмахсем шăрăх çу кунĕсенче пĕвесемпе кӳлĕсенче шыва кĕме юратакансем тĕлĕшпе уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Шăрăх çанталăкра шыва кĕрсе уçăлас ырлăхпа усă куракансен мĕн асра тытмалла-ха? Хаçат вулакансене паян ансат правилăсемпе ăнланмалла паллаштарам.

– Хĕвел çинче пиçсе каяс хăрушлăх çук чухне – ирпе е каçпа – шыва кĕни хăрушсăртарах пулнине асра тытăр.

– Сывлăш температури 25 градус, шыв температури 17 – 19 градус ăшă чухне шывра 15 – 20 минут пулма юрать. Шыв температури 16 градус е унран та пĕчĕкрех чухне шыва кĕме пачах юрамасть. Ахальлĕн хăвăрт çеç шăнăрсем туртса лартма пултараççĕ.

– Шывра хăвăра сивĕ пулнине тата шăнăрсем туртас хăрушлăх пуррине туйсан, хăвăртрах çырана тухăр. Шăлăнса типшĕнсен, хĕвел çинче ăшăннă хыççăн тумтир тăхăнăр.

– Нумай вăхăт хĕвел çинче пулнă хыççăн шыва тăрук кĕме юрамасть.

– Апат çинĕ хыççăн 1,5 сехетрен çеç шыва кĕме юрать.

– Ачасене шыва кĕмелли йĕркепе лайăх паллаштарăр, хăвăр та йĕркене ан пăсăр.

– Ачапа шыва кĕнĕ чух яланах ун çывăхĕнче пулма тăрăшăр. Пĕчĕк ача çеккунтрах шыв çăтса чыхланма пултарать.

– Шкул çулне çитмен ачасене кимĕпе тата ытти хатĕрпе ишме ан илĕр – ку хăрушă. Шыва кĕме илес пулсан та, вĕсене çырантах çăлав жилечĕсем тăхăнтартăр.

– Шыва кĕме ятарласа хатĕрленĕ вырăнсене суйласа илĕр. Унта таса, тирпейлĕ, çăлавçăпа медицина ĕçченĕ те пур.

– Таса мар шыва кĕресрен асăрханăр.

– Ачасем шыв хĕрринче вылянине те куçран ан вĕçертĕр.

– Аслисем вĕрентнипе çеç ачасем тĕрĕс ишме вĕренейреççĕ.

– Ачасене кĕпер тата причал çинчен шыва чăмма, ишекен кимĕсем патне çывхарма чарăр.

– Çын шыва путнине курсан ăна пулăшма çăлав ункипе пырăр.

Шывра инкек тӳсекене асăрхасан вăхăта çухатмасăр ăна пулăшма васкăр. Пуçне шыв çинче тытса ăна çырана илсе тухăр та вырăнтах малтанхи медицина пулăшăвĕ парăр, хыççăн больницăна ăсатăр.

Маларах асăннă йĕркесене пăхăнсан çеç çыран хĕрринчи кану ырăпа нумай вăхăта асра юлĕ.

**В. МАТВЕЕВ,**
**санитарипе гигиена врачне пулăшаканĕ.**

Июнĕн 26-мĕшĕ – Наркомание тата наркобизнеса хирĕç кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун

# Наркомани – хăрушă серепе

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, улшăнсах пырать. Темиçе çул каялла акă наркомани пирĕн пурнăçра нихăçан та пулма пултарайман пулăм тесе шухăшлаттăмăр. Вăл ют çĕршывсенче, ытти хулара пулсан та, пирĕн тăрăхри ялсене çитес пек туйăнмастчĕ. Йăнăшнă иккен.

Халĕ куратпăр, çак инкек умне ытларах çамрăксем пырса тухрĕç. Çавăнпа çул çитменнисен наркотик серепине лекесрен уйрăмах асăрханмалла.

Мĕн-ха вăл наркотик? Наркотик тесе çынна психологи тĕлĕшĕнчен улăштарма усă куракан препаратсене калаççĕ. Вăл уйрăмах аталанса, ăс-тăн тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе çитеймен, çул çитмен çамрăксен пуç мимине пысăк сиен кӳрет. Çавăнпа та кашни ашшĕ-амăшĕн çитĕнекен ачине куллен тимлĕх уйăрмалла, вăл наркомансемпе çыхлансран асăрхаттармалла.

Çамрăксем наркотикпа усă курни çивĕч ыйтусенче пĕри пулса тăрать. Наркотик çыннăн ăс-тăнне те хавшатать, кăмăл-сипетне те пĕтерет. Наркомани – социаллă хăрушă пулăм, мĕншĕн тесен вăл криминаллă лару-тăрăва та çивĕчлетет, тĕрлĕрен инфекци чирне сарăласси çине те витĕм кӳрет.

Наркотика пăхăнса пурăнакан çыннăн пĕтĕм ĕмĕчĕ, ăнтăлăвĕ – наркотик туянма ăçтан та пулин укçа тупасси. Çакă вĕсен пурнăçĕнчи тĕп, чылай чухне пĕртен-пĕр тĕллевĕ пулса тăрать.

Шел пулин те, наркотикпа усă куракансен шучĕ ӳссех пырать. Çамрăк çынна наркотикран хăтăлма йывăртарах. Сăнаса пăхсан, наркотикпа усă куракан çынсен çак енсем палăраççĕ:

- кăмăл-туйăм улшăнса пыни;
- ыйхă пăсăлни;
- куç шăрçисем ытлашши пысăк е пĕчĕк пулни;
- аппетит пĕтни е ытлашши нумай çини, ытларах пылак апат-çимĕç енне туртăнни;
- сăлтавсăрах хăйне япăх туйни, ӳсĕр чухнехи пек тыткалани;
- ӳт çинче укол йĕрĕсем пулни;
- унăн тумтирĕнчен хăйне евĕр шăршă кĕни.

Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕн ачисем ăçта тата кампа вăхăта ирттернине пĕлсе тămалла. Ача мĕнле вĕреннипе, унăн юлташĕсем мĕнпе интересленнипе те кăсăкланмалла. Килтен укçа е япаласем çухални вара сисчĕвлентермелле.

Енчен те мĕнле те пулин шикленӳ çуралчĕ пулсан, нарколог врачпа канашламалла. Çын сăмахĕнчен хăрама кирлĕ мар, наркоманирен малтанрах сывалма тытăнни пĕлтерĕшлĕ.

**В. ЕВДОКИМОВА,**
**медицина сестри.**

Суд материалĕсем тăрăх

# Çитменлĕхсене пĕтерме – тăхăр уйăх

Муркаш район судĕнче пăхса тухнă административлă ĕç Шупашкар хулин Ленински район прокурорĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканăн административлă иск заявленине пăхса тухассипе çыхăннă. Прокурор тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ, çынсен интересĕсене хӳтĕлеме ыйтса, вырăнти хăй тытăмлăх органне – Шупашкар хула администрацине – законодательство требованийĕсене пурнăçламаншăн явап тыттарма ыйтнă.

Ĕçĕ акă мĕнпе çыхăннă. Пирĕн район территорийĕнчи Катькас ялĕ патĕнче Шупашкар хула администрацийĕ нумай ачаллă çемьесене парăнмалли çурт-йĕр çĕклеме уйăрса пама 535 çĕр участокĕ йĕркеленĕ. Хула администрацийĕ 2012 çулта Муркаш район администрацийĕпе тунă килĕшӳпе хăйĕн укçи-тенкипе кунти участоксене инженери инфраструктурипе тивĕçтерме пулнă.

Муниципаллă контракт тунă хыççăн виçĕ çул хушши Шупашкар хула администрацийĕ çĕр участокĕсене инженери инфраструктурин объекчĕсемпе тивĕçтерессипе нимех те туман. Çакă вара нумай ачаллă çемьесен РФ Конституцийĕпе тата федераци законодательствипе гарантиленĕ прависене хĕсĕрлени пулать.

Материалсене тĕпченĕ май çавна калама пулать. Туса хатĕрленĕ проектпа килĕшӳллĕн инфраструктура объекчĕсене тăвасси 429,3 млн тенкĕне кайса ларать. Укçа-тенкĕ сахал мар кирлĕ. Ку укçа-тенкĕне 2015 – 2019 çулсем валли Чăваш Республикин бюджетĕнче те пăхса хăварман. Çавна май Чăваш Республикин Строительство министерстви проекта пурнăçа кĕртме, инженери инфраструктурин объекчĕсене тума муниципалитет йĕркеленĕвĕсене организацисен бюджетпа çыхăнман укçи-тенкине явăçтарма сĕнет. Газ кĕртесси енĕпе акционерсен «Газпром газораспределение Чебоксары» обществине, электричество сечĕсене тума «МРСК-Волги» ОАО «Чувашэнерго» филиалне явăçтарма пулать.

Законодательствăпа килĕшӳллĕн Шупашкар хула администрацийĕ нумай ачаллисене çĕр участокĕсене уйăрса панă чухнех инженери инфраструктурине йĕркелессипе мерăсем йышăнма тивĕç пулнă. Халĕ вара газ, электричество, шыв сечĕсем пулманнипе уйăрса панă çĕр участокĕсемпе вĕсен хуçисем тĕллевлĕ усă курма пултараймаççĕ.

Çапла вара суд Шупашкар район прокурорĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканăн административлă иск требованийĕсем тĕрĕс тесе йышăннă, ĕç калăпăшне тата ытти сăлтава шута илсе нумай ачаллă çемьесене уйăрса панă çĕр участокĕсене инженери инфраструктурин объекчĕсемпе тивĕçтерессине Шупашкар хула администрацине суд йышăнăвĕ вăя кĕнĕренпе 9 уйăх хушшинче татса пама хушнă.

**Район сучĕн пресс-служби.**

Пирĕн календарь

# Партизансемпе подпольщиксен кунĕ

Июнĕн 29-мĕшĕ Раççей паллă кунĕ пулса тăрать. Ку вăл – Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче фашистсемпе çапăçнă партизансен тата подпольщиксен кунĕ.

1941 – 1944 çулсенче тăшман тылĕнче 6200 партизан отрячĕ çапăçнă, вĕсенче 1 млн çынна яхăн шутланнă. Уйрăмах партизансем тăшманăн тыл коммуникацийĕсене аркатассипе пысăк вырăн йышăннă. Вăрçă çулĕсенче вĕсем фашистсен 20 пин пуйăсне, 2500 пăравусне, 12 пин кĕперне, 42 пин автомашинине, 350 пин вакунне сывлăша сирпĕтнĕ тата аркатнă, 6 пин танкне стройран кăларнă, сывлăшра тата аэродромсенче 1100 самолета тĕп тунă, 600 пин салтакпа офицера вĕлернĕ, 50 пин çынна тыткăна илнĕ.


Объявления / Пĕлтерӳсем

**Интересный пенсионер, моложавый, с чувством юмора, автолюбитель с умелыми руками, для совместного проживания в деревне приглашает пенсионерку до 65 лет, добрую, душевную, независимую от детей и внуков. Условия жизни приближенные к городским, без живности. Тел. 8-903-064-67-60.**

* * *

**Продаю козу с козлятами. Тел. 8-953-014-74-31.**

* * *

**Зааненски ăратлă качакан пĕр уйăх çурăри путеккипе такине сутатпăр. Тел. 8-927-840-39-69.**

* * *

**Виççĕ пăрулана хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Турай ялĕ. Тел. 8-967-790-38-21.**

* * *

**ООО «МИРТРУБПЛАСТ» требуются операторы экструдера, комплектовщики. Тел. 8 (83541) 69-3-43. 3-3.**

* * *

**Тюкланă утă сутатăп. Тел. 8-927-865-37-16.**

**Сумалли сĕтлĕ 3 ĕне сутатпăр. Тел. 8-937-397-07-85.**

* * *

**Продаю пчелосемьи с ульями, ульи-лежаки на 24 рамы, утепленные в комплекте, и пчелоинвентарь. Тел. 8-903-064-67-60.**

* * *

**ПЕСОК КАРЬЕРНЫЙ, РЕЧНОЙ, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА, ГРУНТ, НАВОЗ и.т.д. Доставка по Моргаушскому району от 1 до 20 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 1-10.**

* * *

**Фундамент, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Металлочерепица, профлист, сайдинг по низким ценам. Проект, смета бесплатно. Тел. 8-987-670-56-78. 7-10.**

* * *

**Продаем ячмень, пшеницу – 7 руб. С доставкой – 8 руб. Тел. 8-927-843-52-40. 2-3.**

Объявления / Пĕлтерӳсем

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и др. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 5-10.**

**КРОВЛЯ ЛЮБОЙ СЛОЖНОСТИ**
**Работаем быстро: качественно, дешево. Поможем подобрать и доставить стройматериалы по низким ценам. Цены ниже, чем на рынке. КЛАДКА, ФУНДАМЕНТНЫЕ работы. Тел.: 8-905-342-00-70. 1-10.**

**ЭЛЕКТРОПАСТУХ для частных и коллективных хозяйств на любую площадь до 20 га. Тел. или 8-967-050-88-98.**



1-10

**КРОВЕЛЬНЫЕ, ФУНДАМЕНТНЫЕ РАБОТЫ. Профнастил, черепица. Тел. 8-905-341-24-39. 1-20.**

**Продаю кур, гусят, утят, мулардов, бройлеров, индюков. Бесплатная доставка. Тел. 8-909-300-08-18. 14-21.**

* * *

**Куплю скотину дорого: бычков, КОРОВ, телок, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-961-346-19-79. 15-17.**

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ И БЫЧКОВ. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Купим и больных. Тел. 8-927-851-27-77. 11-17.**

* * *

**Продаю: Гравмассу. Бой кирпича. Песок. Щебень. Доставка. Тел. 8-905-028-22-25. 2-10.**


**ТАВ ТĂВАТПĂР**

Москакассинче пурăннă Валерий Васильевич Трихалкина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Москакасси шкул коллективне, «Колокольчик» ача сачĕн коллективне, пур тăвана, кӳршĕсене, ял-йыша чĕререн тав тăватпăр.

**Трихалкинсен çемйи.**

Москакассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул завхозра ĕçленĕ

**Валерий Васильевич ТРИХАЛКИН**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная.Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 6-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ Тел. 8-927-667-40-92. 42-48.**

**ПРОДАЕМ: керамзитобетонные блоки, кирпичи, цемент, песок, гравмассу. УСЛУГИ манипулятора, самосвала. Тел. 8-960-307-41-78. 15-25.**

**Продаю ГРАВМАССУ, ПЕСОК. Тел. 8-905-199-69-33. 15-30.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 8-10.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-903-065-60-58. 7-44.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-919-650-96-68. 6-8.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел. 8-903-389-94-76. 6-8.**


## К сведению бытовых потребителей электроэнергии!

Постановлением Государственной службы Чувашской Республики по конкурентной политике и тарифам от 12 декабря 2017 г. № 118-24/э «Об установлении цен (тарифов) на электрическую энергию (мощность), поставляемую населению и приравненным к нему категориям потребителей, по Чувашской Республике на 2018 год» утверждены тарифы на электрическую энергию, поставляемую АО «Чувашская энергосбытовая компания», на II полугодие 2018 года для населения и приравненных к нему категорий потребителей.

**С 1 июля 2018 года** будут применяться следующие одноставочные тарифы на электроэнергию для населения Чувашской Республики, проживающего:

- в городских населенных пунктах:

в домах, не оборудованных в установленном порядке стационарными электроплитами и (или) электроотопительными установками, – 3,25 руб./кВт•ч;

в домах, оборудованных в установленном порядке стационарными электроплитами и (или) электроотопительными установками, – 2,28 руб./кВт•ч;

- в сельских населенных пунктах – 2,28 руб./кВт•ч;

С полным тарифным меню можно ознакомиться на сайте АО «Чувашская энергосбытовая компания» (ch-sk.ru) в разделе «Частным клиентам/Тарифы».

АО «Чувашская энергосбытовая компания» просит предоставить показания приборов учета электроэнергии по состоянию на конец июня 2018 года и напоминает о необходимости своевременно оплачивать за потребленную электроэнергию.

**АО «Чувашская энергосбытовая компания»**

* * *

**Продаю ДЕШЕВО асфальтную крошку, щебень (ОПГС), гравмассу, песок, бой кирпича, чернозем, торф, навоз. Доставка. Тел. 8-961-347-25-47. 4-14.**

Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул коллективĕ кунта физкультура тата ĕç урокĕсене вĕрентнĕ С.М. Яниковăн ашшĕ

**Модест Васильевич ЯНИКОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан Чуманкасси вăтам шкул коллективĕ кунта чылай çул директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса тимленĕ тата математика учителĕнче ĕçленĕ

**Модест Васильевич ЯНИКОВ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Турайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта пуçламăш классене вĕрентекен О.М. Петрован тата физкультурăпа ОБЖ предмечĕсене вĕрентекен С.М. Яниковăн ашшĕ

**Модест Васильевич ЯНИКОВ**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Прогноз погоды — По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +19 | +22 | +26 | +20 | +16 | +22 | +24 | +18 | +17 | +20 | +23 | +19 | +18 | +23 | +27 | +22 |
| Давление | 751 | 751 | 750 | 750 | 749 | 749 | 748 | 747 | 747 | 747 | 745 | 744 | 744 | 744 | 743 | 743 |
| Ветер | 3 | 3 | 5 | 4 | 4 | 4 | 5 | 2 | 3 | 2 | 1 | 3 | 3 | 5 | 5 | 6 |
| Порывы | 7 | 7 | 11 | 9 | 7 | 9 | 11 | 7 | | 5 | | | | 9 | 10 | 10 |
| Направление | С | С | С | С | С-З | С | С | С-З | С-В | В | В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В | Ю-В |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редакторшăн Н.Н. НИКОЛАЕВА

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ А.И. Волкова.
Пичете панă 26.06.2018 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4761

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.